Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* 112 N (4681) *1998 çулхи октябрь (юпа) уйăхĕн 2-мĕшĕ, эрнекун* *Палăртнă хакпа.*

## Ăста механизатор



*Хуçалăхра хăватлă К-700 трактор валли ĕç яланах çителĕклĕ. Унпа Ринат Шайхутдинов вăй хурать. Анчах та çуркунне тата кĕркунне механизаторсем валли ĕç тата та нумай. Акă кăçал кĕркунне Ринат малтан кĕрхи культурăсем акма тăпра хатĕрленĕ, кайран вара çĕртме сухалама тытăннă. Халь те вăл кунсерен 16 гектар ытла лаптăк çинче çĕртме сухалать, çав вăхăтрах ĕç пахалăхне те пысăк тимлĕх уйăрать. Юлашкине тивĕçтерме ăна французсен плугĕпе усă курни пулăшать.*

*Шайхутдинов тăван хуçалăх хирĕсенче вунпилĕк çула яхăн вăй хурать ĕнтĕ, вĕсенчен 4 çулне К-700 тракторпа ĕçлет. Иртнĕ çул вăл 1200 гектар сухаланă, ку "Тан" хуçалăхри чи пысăк кăтарту. Хресченсен хуçалăхĕсен "Тан" ассоциацийĕнчи ĕçченсем палăртнă участоксене пĕтĕмпех сухалама шутлаççĕ, ку ĕçре те Р.Шайхутдинов пек ĕçченсене шанаççĕ.*

*Ӳкерчĕкре: "Тан" хуçалăх механизаторĕ Р.Шайхутдинов.*

## Хаçат çырăнакансене пĕлсе тăма

1999 çулхи пĕрремĕш çур çула районта тухса тăракан "Дуслык" ("Дружба", "Туслăх") хаçата çырăнтарасси октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçланать. Хаçат хакĕ - **25 тенкĕ те 20 пус**; Аслă Отечественнăйлла вăрçа хутшăннисен тата инвалидсен, Афганистанра пулнă воин-интернационалистсен, ЧАЭС аварие пĕтернĕ çĕре хутшăннисен 50 процент кăна тӳлемелле (çирĕплетекен документсем пулсан).

Çав вăхăтрах хаçат çырăнакансене çакна та пĕлтерес тетпĕр - шел пулин те, финанспа пурлăх енчен йывăрлăхсем пулнипе район хаçачĕ пĕрремĕш çур çулта сахалтарах тухĕ: вулакан ăна эрнере иккĕ çеç илсе тăрĕ - юнкунсенче тата шăматкунсенче (юлашкинче - ТВ программи).

Кăçал çаплах хаçата йӳнĕ хакпа çырăнтарассине те пăрахăçлама тӳр килнине те ăнланмалла ĕнтĕ. Анчах та сирĕншĕн те, пирĕншĕн те кăмăллах мар пулнине пăхмасăр, эпир сире, хисеплĕ вулакансем, район пурнăçĕ çинчен малтанхи пекех тĕплĕн пĕлтерсе тăрăпăр тата эсир пирĕнпе, "Туслăхпа" юласса, ăна çырăнса илессе шанатпăр.

Çапла, хаçат çырăнтарасси пуçланчĕ, çырăнтаракан пунктсене васкăр.

## Улшăнусем çук

**Хальхи вăхăтра вырăнта тавар туса кăларакан предприятисенче лару-тăру мĕнле-ха? Çак ыйтăва эпир вĕсенчен хăшне-пĕрне патăмăр.**

**Нурлатри çăкăр завочĕ:**

- Продукци сутас тĕлĕшпе улшăнусем çук, малтанхи пекех талăкра 4 тонна яхăн çăкăр тата çăкăр-булка изделийĕсем сутатпăр, халăхăн укçа çук, - терĕç пире заводра. - Тавара ытларах туянсан ăна туса кăларассине ӳстерме май пур. Хальхи вăхăтра çĕнĕ продукци - "Адажио" булка пĕçерме пуçларăмăр, çаплах шултра шушкă та пĕçеретпĕр, "Пĕчĕк булкăсене" те çынсем кăмăллах туянаççĕ. Продукцие, тĕпрен илсен, хамăр магазинсем урлă сутатпăр.

**Нурлатри сĕт-çу комбиначĕ:**

- Продукци туса кăларас тĕлĕшпе улшăнусем çук, ыттисенни пекех хальхи вăхăтра пирĕн те питĕ йывăр тапхăр. Улшăнусем çулталăк вĕçĕнче пулма пултараççĕ.

**Нурлатри аш-какай комбиначĕ:**

- Юлашки уйăхсенче йӳнĕ продукци туса кăларассине пысăк тимлĕх уйăратпăр. Çапла, "Сабантуй", "Пригородная", "Уездная", "Слободская" пĕçернĕ кăлпассисен, "Дуслык", "Молочные" сарделькăсен хакĕ 17-20 тенкĕ çеç, çавăнпа та вĕсене хăвăрт туянса пĕтереççĕ. Çурма тĕтĕмленĕ "Казанская" тата "Субпродуктовая" кăлпассисем те çӳлĕксем çинче нумай тытăнса тăмаççĕ. (Пĕр килограмм хакĕ 13 тенкĕ те 60 пус). Финанс енчен йывăр тапхăрта хамăр магазин урлă 1 тата 2 категориллĕ хушма продуктсем те сутатпăр. Çапла, "Домашний" вĕтетнĕ ашăн (фарш) пĕр килограмм хакĕ 6 тенкĕ, "Особый" ашăн - 8 тенке яхăн. Эпир пĕрремĕшĕсен шутĕнче пенсионерсене тивĕçтерме тытăннине те палăртса хăвармалла. Хальхи вăхăт тĕлне эпир ватă çынсене 55 пин тенкĕлĕх продукци сутрăмăр, ку вĕсемшĕн пысăк пулăшу.

**Сведенисене С.ХАЙРУЛЛИНА илнĕ.**

### Пĕр хуçалăхран килнĕ хыпарсем

## Сахăр пылак, анчах та ĕçĕ йывăр

Хресченсен хуçалăхĕсен Хафизов ячĕпе хисепленекен ассоциацийĕн 1-мĕш номерлĕ кооперативĕнче халь 80 гектарлă хирте чĕкĕнтĕр кăлараççĕ. Мансур Насыбуллин механизатор французсен комбайнĕпе ĕçлет, Михаил Охотников водитель вара сахăр кăшманне кагатсем патне турттарать. Вĕсем хăйĕн ĕçне яланах тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлаççĕ. Хĕрарăмсем чĕкĕнтĕр касаççĕ, вĕсем хирте 10-14-ăн ĕçлеççĕ.

Вĕсен хушшинче уйрăмах Ольга Кульметьевана, Лейсан Сафиуллинана, Наиля Зялаловлана, Валентина Яллинана, Гульзиган Зялаловлана, Гамбар Зялаловлана палăртмалла.

Кăçалхи çул условийĕсемпе чĕкĕнтĕр япăх мар. Чĕкĕнтĕр кăларакансем вăйĕсене шеллемесĕр, тухăçа хăвăртрах пухса пĕтерес тĕллевпе ĕçлеççĕ.

## Ĕçе парăннă

Алексей Иванович Алексеев хуçалăхра механизатор пулса ĕçлеме тытăннăранпа 40 çул çитет ĕнтĕ. Ĕçе вара вăл 15 çултах пуçăннă. Халь çĕр ĕçченĕ 55 çулта. Туслă та ĕçе юратакан çемье унăн. Мăшăрĕ Елена Петровна шкулта учитель пулса ĕçлет. Вĕсем виçĕ ача пăхса ӳстернĕ. Хĕрĕпе ывăлĕ хальхи вăхăтра аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренеççĕ, иккĕмĕш ывăлĕ водитель пулса ĕçлет.

Алексей Иванович ĕçе тăрăшса тăвать, хушнине ялан итлет. Халь ыттисемпе пĕрле чĕкĕнтĕр кăларнă çĕрте вăй хурать - погрузчикпа ĕçлет.

**Т.ДЕРБЫШЕВ.**

## ПУРНĂÇ ТĂРШШĔПЕХ ĔÇРЕ

* Ялкорсем çыраççĕ

Ытти ялсенче мĕнлетĕр пĕлместпĕр, пирĕн ялти выльăхсене вара питĕ лайăх кĕтӳçĕ кĕтет. Ирхине ирех выльăхсене йышăнать те, кунĕпе вĕсене çарансем çинче кĕтет, каçхине вара сывă та тăраннăскерсене яла хăваласа килет. Ку вăл Харис Хатыпович Гарифуллин. Вăл выльăхсене хăваласа тухман пĕр кун та пулман, Акатуй кунĕ те ял çыннисене пăшăрханма кирлĕ мар: Харис пичче ирхине пиллĕкмĕш çурринче ура çинче.

Вăл çынсемпе яланах тараватлă калаçать, пурин çинчен те ыйтса пĕлет, кирлĕ пулсан вара канаш парать. Кĕтӳçĕ ĕçĕ чи йывăр ĕçсенчен пĕри. Çуркунне курăк шăтса тухсанах тытăнать те мĕн юр çăвиччченех хăть мĕнле çанталăкра та уçă пĕлĕт айĕнче. Апла пулин те вăл ӳпкелешмест. Харис пиччен килĕнче те пурте йĕркеллĕ, картиш тулли выльăх-чĕрлĕх. Хĕлле Харис Хатыпович фермăра хуралçă пулса вăй хурать. Мăшăрĕпе Назия аппапа вĕсем нумай çул хушши туслă, килĕштерсе пурăнаççĕ, ĕçчен ачасем пăхса ӳстернĕ, вĕсен хĕрĕ Раиса больницăра медсестра пулса вăй хурать.

**Ф.ГАРИФУЛЛИНА.**
**Кивĕ Элмет ялĕ.**

## ВĔСЕН КАНĂÇ ÇУК

Хăйсен пĕтĕм пурнăçне хресченĕн йывăр ĕçне халалланă канăçсăр хĕрарăм-пенсионерсем халь те-ха алă усса лармаççĕ. Вĕсен ĕç ялан çителĕклĕ. Тĕслĕхрен, Амина Сафина, Гаршия Бильданова, Мадина Халиуллина, Фаузия Харлямова çу тăршшĕпех йĕтем çинче вăй хучĕç. Хĕрарăмсем тивĕçлĕ канăва кайиччен хуçалăхăн тĕрлĕ участокĕсенче ĕçленĕ. Ĕнесем те сунă, пăрусем те пăхнă, сахăр кăшманĕ те ӳстернĕ. Хальхи вăхăтра та хуçалăха вăй пур таран пулăшма тăрăшаççĕ. Вĕсене çирĕп сывлăх, телей сунас килет.

**З.ИСМАГИЛОВА.**
**Кăчăканлă ялĕ.**

### Тутарстанта ачасен сывлăхĕшĕн тăрăшмалли çулталăк пырать

## Алексеевск районĕнчи семинарта

Иртнĕ эрнере пирĕн районти çутĕç учрежденийĕсен ертӳçисем Алексеевск районĕнче ТР çутĕç Министерстви йĕркеленĕ республикăри зонăри семинарта пулчĕç. Семинарăн тĕп теми: "1998 çулхи августăн 7-мĕшĕнче иртнĕ çутĕç ĕçченĕсен республикăри конференцин рекомендацийĕсене пурнăçлассинчи ТР çутĕç системинчи тĕп çул-йĕрсем". Тĕпрен илсен, семинара шкулта вĕренекенсен сывлăхне сыхлас ыйтăва халалланăччĕ. Семинар ĕçне Нурлат, Спасск, Алексеевск, Элкел районĕсен представителĕсем хутшăнчĕç. Пленарлă лару тата секци ĕçĕсем хыççăн семинара хутшăннисем Алексеевск районĕнчи 3-мĕш номерлĕ вăтам шкул пурнăçĕпе тата ĕçĕпе паллашрĕç.

**Н.ГИЗЗАТУЛЛИНА.**

# Истори çинчен каласа пани...

**Раççейре мундирсемпе погонсене яланах юратнă.** Ку вăл Тăван çĕршывăн йăлисенчен пĕри. Ăна эпир юлашки çулсенче телехыпарсенчен пĕлекен çарти йывăр лару-тăру та улăштараймасть. Ку сăмах май çеç-ха, вулакан эпир хальхи йывăр вăхăта манса кайнă тесе ан шутлатăр тенипе. Паян вара эпир пĕр паллă датăна аса илтерес тетпĕр, вăл район историйĕнче хисеплĕ вырăн йышăнть. Çапла, 1998 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче Нурлат районĕн çар комиссариачĕ 60 çул тултарчĕ. Çавăнпа та çара юрăхлă çынсен пурин те Çар, унти пĕр евĕрлĕ (?) пурнăç çинчен аса илме сăлтав пур. 18 çулхи ачасемпе вĕсен амăшĕсене вара çак факт тата ытларах пăшăрхантарать: кĕрхи призывчен вăхăт нумай юлмарĕ.



**Çак пулăмăн кĕске историйĕ.** Нурлат районĕн çар комиссариатне СССР НКО хушăвĕпе 1938 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче йĕркеленĕ. Пĕрремĕш çар комиссарĕ Н.Г.Молчанов лейтенант пулнă. Штат пĕчĕккĕ пулнă - пурĕ те 3 çын çеç. Тутарстанти çар комиссариачĕ пирĕн çар комиссариатне яланах ырăпа асăннă, халь те çаплах. Аслă Отечествăлла вăрçă çулĕсенче Хĕрлĕ Çар чаçĕсене комплектлассипе çыхăннă ыйтусене татса парас тĕлĕшпе унăн личнăй составĕ нумай пулăшнă. Çакăнта тата тылри госпиталь, агитаци ĕçне йĕркеленине, предприятисенче çар хатĕрленĕвĕн никĕсĕсене вĕрентнине тата ыттине те кĕртмелле.

**Çулсем иртнĕ.** Обществопа экономика лару-тăрăвĕ, общество политика шухăшĕсем улшăннă, çапах çар комиссариачĕн ĕçченĕсем вăйне тата вăхăтне шеллемесĕр тăрăшнă - мобилизаци хатĕрленĕвне йĕркелессипе, çара тивĕçлĕ çынсене çĕнĕрен хатĕрлессипе, çамрăк ăрăва воспитани парассипе, ветерансемпе инвалидсене мĕн пултарнă таран пулăшассипе çыхăннă задачăсене пурнăçланă. Хаçат вулакансем тĕрлĕ вăхăтри çар комиссарĕсене астăваççĕ ĕнтĕ - Иван Васильевич Касаткин подполковник, Иван Матвеевич Суняев подполковник, Михаил Алексеевич Гусев подполковник, Анатолий Иванович Коптелов майор, Энес Абдурахманович Алеев майор, Игорь Михайлович Бавин майор, Рустем Шарифович Хафизов подполковник... 1997 çул вĕçĕнчеппе Фаргат Авхатович Садриев подполковник. Вăл Хусанти ракета çарĕсен инженер училищине пĕтернĕ. Хусанти РВКсенчен пĕринче ĕçлесе опыт пухнă. Професси ăсталăхĕ пысăк, уйрăм çынна тата лару-тăрăва тĕрĕс хак пама пĕлет, хăйне пăхăнакансенчен çирĕп ыйтать. Нумай сăмахламасть, субординаци дистанцине тытма пĕлет. Комиссариатра çакă кирлĕ те: ахаль коллектив кăна мар вĕт...

Кунта ветерансем пур-ши? Пур, паллах, ытти çĕрти пекех. Çавăнпа та чи малтан хĕрарăмсене асăнаççĕ: ВС служащине, мобделопроизводство заведующине Зульфия Насыховна Файзуллинана тата секретлă пай начальникне Вера Ивановна Чубурована. Вĕсен ĕçĕнчен тĕслĕх илме пулать, çамрăксем шăпах вĕсенчен тӳрĕ кăмăллă, яваплă пулма вĕренеççĕ. Çар комиссариатĕнче Афганистанри вăрçăра çар опычĕ пухнă Марат Салимович Абдрахманов капитан служба иртет. Равиль Салимович Насыбуллинпа Ильяс Ахмадуллович Хафизуллин ĕçе тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлаççĕ, вĕсем ыттисене тĕслĕх кăтартаççĕ.

**Тĕплĕнрех илсен, çар комиссариачĕ тăватă енлĕ ĕçлет** - кашнишĕн пĕрер отделени яваплă. Пĕрремĕшĕ - мобилизаци отделенийĕ. Лару-тăру тĕрлĕрен пулма пултарать, çав шутра чи кăткăсси те, çавăнпа та яланах хатĕр пулмалли çинчен нумай калама кирлĕ те мар. Ку тĕлĕшпе сехете, минута та çырса палăртнă. Иккĕмĕш отделени çара илес тĕлĕшпе ĕçлет. Сăмах май, Нурлат пĕчĕкрех статус йышăннă вăхăтра пирĕн комиссариат çак разрядри ыттисем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăнса тăнă. Паллах, иккĕмĕш отделени салтака кайма вăхăт çитмен çамрăксемпе те ĕçлет. Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче шкул программинче НВП предмет пур. Халь вăл урăхла ятлă - ОВС (çар службин никĕсĕсем). Кашни уйăхăн юлашки эрнекунĕнче комиссариата ОВС вĕрентекенĕсем пуçтарăнаççĕ - кунта вĕсем хăйсем вĕренеççĕ. Сывлăх программине илсен вара, кунта каччăсем 14 çултан тытăнса çулталăкра пĕрре - ятарлă, 17 çултан - тĕплĕ медосмотр иртеççĕ. Çак ĕçе районти тĕп больницăпа пĕрле йĕркелеççĕ. Кунта яланах тĕрĕслев кирлине ăнланмалла ĕнтĕ. Çамрăксен сывлăх кăтартăвĕсем япăхланса пынине палăртмалла. Патологисем пур. Çамрăксен нумай чухне ӳт-пӳ виçи çитмест.



Çиме çитмест-ши? Спортпа туслă мар-ши? Кунта тата специалистсене хатĕрлессипе çыхăннă ыйтусене те илсе пыраççĕ. Маларах водительсене Лениногорскри автошкулта хатĕрленĕ, халь вара автоĕçе шкулта та вĕрентеççĕ, ОСТО урлă та кадрсем хатĕрлеççĕ. Çар комиссариатĕнче профотбор ушкăнĕ ĕçлет. Пулас салтаксене 17 çула çитсен ăнкарулăх, тимлĕх енĕпе тестировани ирттереççĕ, тĕрлĕ задачăсем шутлаттараççĕ, тата ытти те, кĕскен каласан, суйласа илмелли хăйне евĕрлĕ система пур, çакăнтах ачасем нервпа психика енчен мĕнле ушкăнра пулнине палăртаççĕ. Сентябрĕн 25-мĕшĕнче черетлĕ тестировани пулнă. Ăна 20-е яхăн çын иртнĕ.

Комиссариатра тата отделенисем пур - виççĕмĕшĕ, вăл запасри офицерсене шута илсе пырас енĕпе ĕçлет, тăваттăмĕшĕ - запасри сержантсене шута илессипе тата кунта финанспа социаллă тивĕçтерӳ те кĕреççĕ. Юлашкипе ĕçсем йывăрланса пыраççĕ, ун çинчен кăшт аяларах асăнăпăр, шута илес тĕлĕшпе вара кунта йĕрке. Çар çынни. Хытă хут çинче çара тивĕçлĕ çын çинчен çырнă: хăçан тата ăçта çурални, пĕлӳ илни, специальность, çемье составĕ мĕнпур улшăнусемпе, ăçта службăра пулнă, ĕçе, пропискӑна улăштарнă-и тата ытти те. Çапла 50 çула çитиччен. Запасри офицерсене 55 çула çитиччен.

**Нурлат хулинчи çар комиссариачĕ хăйĕн юбилейне лайăх результатсемпе кĕтсе илнĕ.** Иртнĕ çулхи итогсем тăрăх вăл Тутарстанти хăйĕнпе пĕр пек разрядлă ОВКсем хушшинче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Август уйăхĕнче Тутарстанти çар комиссариачĕ комплекслă тĕрĕслев ирттернĕ. Результатсем лайăх. Çар реформисем тĕлĕшпе пирĕн çар комиссариатĕнче асăрханаççĕ - финанс енчен лару-тăру йывăр. Реформăсен шутне чи малтан çынсен шутне кĕскетесси кĕрет, тĕслĕхрен, полка кĕскетес тесен, укçа ăна çулталăкĕпе финансласинчен те ытларах кирлĕ. Ансатах мар. Пособисем тӳлемелле, хваттерпе, ĕçпе равламалла. Çар самоуправленийĕн вырăнти органĕсенчи пек çирĕп йĕркесем тата ăçта пулччĕр? Талăкĕпех ĕçленине ан манăр тата: çĕрлехи дежурствăра çывăрма çук. Йывăрлăхсем сиксе тухма пултараççĕ.

**Çар комиссариачĕн ĕçченĕсем палăртнă тăрăх çар комиссариачĕ çарпа халăха пĕрлештерсе тăрать.** Ку çапла та. Анчах та вăл хальхи вăхăтра ытти ахаль çынсем пекех питĕ йывăр лару-тăрура. Çар комиссариачĕн çурчĕ питĕ кивĕ, пурлăхĕ çинчен вара каламалли те çук. Европа стандарчĕсемпе килĕшӳллĕн хăпартнă ĕç офисĕсене мĕнле-ха кунта аса илмĕн? Чăнах та çĕнĕ çуртăн никĕсне хывнă, специалистсем çирĕплетнĕ тăрăх, проектпа питĕ чаплă пулмалла. Анчах та строительство валли укçа-тенкĕ хăçан тупăнасса никам та пĕлмест. ОВК хальхи вăхăтра коммуналлă тата çыхăну услугисемшĕн 42430 тенкĕ тӳлемелле. Ĕç укçи май уйăхĕшĕн çеç илнĕ-ха. Социаллă тӳлевсене те



çыхăннă ыйтусене татса памалла... Нурлатри ОВКра та кĕскетӳ пулнă: пĕлтĕр кĕркунне икĕ çынна кĕскетнĕ, республика тăрăх вара çак шут виççĕр ытлăна çитет. Тата. Комиссариатри офицер составĕ кăçалхи çул çар училищисенче Нурлат районĕнчи курсантсем нумайрах пуласса шаннă, анчах та халлĕхе 30 абитуриентран 5-6 кăна вĕренме кĕнĕ. Каччăсем Хусанти инженерпа артиллери, Саратоври химзащита тата ытти училищĕсене кĕме экзаменсем панă. Раççейре училищĕсене икĕ хут кĕскетнĕ, çавăнпа конкурс та пысăк. Яшсем малтанхи пекех арçын ĕçне алла илес теççĕ, кунта тата çăмăллăхсем те пур, II курс хыççăн паракан стипенди те 400-500 тенкĕ шутланать.

**Професси пахалăхĕсем çинчен.** ОВКра ĕçлекенсен законсем пĕлмелле, тивĕçе пурнăçламалла, дисциплина пăхăнмалла, васкавлă решени йышăнма, çынна тимлĕ итлеме пĕлмелле. Йĕркесĕрлĕхе каçармаççĕ: телеграммăна - 3 кунра, çырса ыйту панине 10 кунра ху- "вăхăтлăха чарнă". Офицерсемпе прапорщиксенчен çуррине хваттер кирлĕ.

**Анчах та служба тивĕçĕсене пурнăçламалла. Лайăх, тивĕçлĕ. Ку паллă ĕнтĕ. Йывăр, анчах та коллектив пурăнать тата ĕçлет.** Халь ĕç тата хушăнать. Октябрĕн 1-мĕшĕнчен медицина комиссийĕ хăйĕн ĕçне пуçлать, ноябрь-декабрь уйăхĕсенче çамрăксене салтака ăсатĕç. Пирĕн яшсем тĕрлĕ çĕрте службăра тăраççĕ, вĕсене ытларах лайăх енчен çеç асăнаççĕ. ВМФ тата МВД çарĕсенче, чикĕре служба тивĕçĕсене пурнăçлама тивĕçлисене уйрăмах тĕплĕн тĕрĕслеççĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕнче коллектив юбилей уявламан, тепĕр кун вара пĕрле пуçтарăнаççех. Ветерансене, ĕлĕкхи çар комиссарĕсене чĕннĕ - вĕсем килме пулнă. Тĕлпулура иртнине асăнĕç, малашлăх çинчен калаçĕç. Эпир вара вĕсене пурне те чун-чĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, телей сунатпăр.

**Т.НАЗАРОВА.**

**Н.Азизов сăнӳкерчĕкĕсем.**

● **Наркотиксене хирĕç иртекен эрне тĕлне**

**Раççей Федерацийĕн прокуратури тата РФ Журналистсен союзĕ сентябрĕн 28-мĕшĕнчен тытăнса октябрĕн 3-мĕшĕччен "Шкулсенче - Раççей СМИ эрни. Раççейĕн массăлла информаци хатĕрĕсем наркотиксене хирĕç" пĕрлехи акци ирттереççĕ.**

# Ăнлансан наркоман пулмĕччĕç

Ачасемпе çамрăксем хушшинче наркомани вăйлă сарăлас хăрушлăх пуррине пĕлтерекен çак мероприятие тĕпе хурса пирĕн шкулсенчи аслă классенче вĕренекенсемпе районти тĕп больницăн врачĕсем, ГРОВД тата прокуратура ĕçченĕсем хутшăннипе тĕлпулусем йĕркеленĕ. Çак эрне умĕн, сентябрĕн 25-мĕшĕнче, эрнекун, хулапа район прокуратуринче "çавра сĕтел" хушшине пуçтарăннă. Унта **А.П.Евграфов прокурор, ОППН начальникĕ Н.Н.Курбанов, С.И.Федотов врач-нарколог, районта тухса тăракан "Туслăх" хаçат представителĕ хутшăннă.** Çаплах администрацийĕн çамрăксемпе ĕçлекен пайĕн тата районти вĕрентӳ пайĕн представителĕсене чĕннĕ. Питĕ шел, анчах юлашкисем килмен. Прокурор кăна çапла ăнлантарчĕ: "Апла пулсан, вĕсене çак ыйту пăшăрхантармасть е вĕсем тата кирлĕрех ĕçсем пурнăçлаççĕ..."



Республикăра çула çитмен çамрăксем наркотиксемпе усă курни хăрушă пулăм пулса тăчĕ, çакăн çинчен массăлла информаци хатĕрĕсем тăтăшах пĕлтереççĕ. Пирĕн патра мĕнле-ха?

ОППН начальникĕ пĕлтернĕ тăрăх, учетра çулталăк пуçламăшĕ тĕлне наркотиксемпе усă куракан 10 çамрăк тăнă, хальхи вăхăтра урăх çĕре куçса кайнине пула пиллĕкĕшне учетран кăларнă; тата 8 ачана токсикомансем тесе учета илнĕ. 13 çултан тытăнса 17 çула çитичченхи ачасем, наркотиксемпе усă куракансенчен виççĕшĕ - СПТУра вĕренекенсем.

**- Пирĕн условисене шута илсе, вĕренекенсем шкултах наркотиксемпе усă курни çинчен калама пулать-и? -** ыйтать прокурор.

- Пĕр-икĕ тĕслĕх çинчен калама пулать, наркотиклă веществосемпе йышлăн усă курас тĕлĕшпе халлĕхе хăрушлăх çук-ха, - тет **Н.Курбанов.** Çапла, иртнĕ çул пĕр ĕç пуçарса палăртнă ултă наркомантан иккĕшĕ - хулари пĕрремĕш шкултан, вĕсене РФ УК 228-мĕш статйин I пайĕпе (наркотиксем упранăшăн, туса хатĕрленĕшĕн) килĕшӳллĕн условно айăпланă. 1998 çулта çав статьяпах икĕ ачана (пĕри Куракъелĕнчен, тепри Нурлатран) условно айăпланă.

**А.Евграфов:** Çак статьяпа айăпламалли мерăна хытармаллине палăртмалла. Тĕслĕхсем те пур ĕнтĕ. Хусан хулинче икĕ михĕ "чĕртаварлă" (măкăнь) гражданина тытса чарнă. Ăна 12 çула тĕрмене лартнă. Çакна асра тытмалла: кантăра (е măкăне) татса илнĕ самантран вăл ахаль курăк мар, наркотик шутланать.

- Кантăр çăмăлрах наркотик шутланать, пĕр-икĕ хут усă курнипех хăнăхмастăн, - каласăва хутшăнать врач - нарколог **С.Федотов.** - Măкăнь тунинчен вара опий хатĕрлеççĕ, пĕрре усă курсанах вăл этем организмне сиенлĕ витĕм кӳрет, алкоголь хыççăнхи пек йĕрĕнӳ туйăмĕ палăрмасть. Алкоголе хăнăхасси ăна нумай вăхăт хушши ĕçнинчен килет пулсан наркотик вара, уйрăммăн илсен опий, çынна хăй мĕн хăтланнине ăнланса илме вăхăт хăвармасть. Çавăнпа та ачасем наркотиксем çинчен нумайрах пĕлни усăллăрах çеç пулĕ. Ашшĕ-амăшĕсем тимлĕрех пулмалли çинчен каламалли те çук: наркотиксемпе ӳсĕрĕлнине вĕсем маларах курма пултараççĕ. Урамра сирĕн ачăра никам та тĕрĕслемест, килте вара эсир ăна куçран вĕçертмелле мар!

**КОРР.: Семен Ильич, наркоман хăйĕн ирĕкĕпе сипленме пынă тĕслĕхсем пур-и?**

- Пĕр тĕслĕх. Б.гражданин чылай вăхăт хушши наркотиксемпе усă курнă. Анчах та кун пек пурăнсан хăйĕн малашлăхĕ пулас çуккине ăнланса илнĕ. Сипленчĕ, лайăх енне улшăнусем пур. Анчах та эпĕ вăл йăлтах сипленсе çитнĕ теме пултараймастăп. Наркотика пула çын хăйне тыткалайми пулать, мĕн хăтланнине пĕлмест. Кăçал çеç эпир наркотиксен дози пысăк пулнипе вилнĕ икĕ тĕслĕх палăртрăмăр. Кусем çамрăк çынсем.

**КОРР.: Çамрăксен пушă вăхăтне усăллă ирттерме тата йĕркеллĕ канма хулара Çамрăксен çуртне уçрĕç. Çамрăксене воспитани парас тĕллевпе вăл пысăк ĕç пурнăçласса шанса тăтăмăр. Шанăça тӳрре кăларчĕ-и вăл?**

- Тӳрех калама та çук. Çурт ертӳçисем çамрăксен канăвне коммерципе çыхăнтарма тăрăшни хумхантарать. Мĕн тумалла-ха ĕнтĕ, урăх заявкăсем пулмасан, теççĕ вĕсем. Заявкăсем пуррипе çукки çинчен çамрăксен пайĕн представителĕнчен ыйтнă пулăттăмăр ĕнтĕ, анчах... Халлĕхе вара пурте çак факта çирĕплетеççĕ: Çамрăксен çуртĕнче канмалли кунсенче ирттерекен дискотекăсенче эрех ĕçнĕ çамрăксем чылай, арçын ачасем те, хĕрсем те. Çук, вырăнта алкоголь продукцийĕ сутмаççĕ, анчах та ӳсĕрсене мĕншĕн ташă каçне кĕртмелле? Ку ыйтăва кама памалла - милицие-и? Милици, тав ăна, ӳсĕррисене пуçтарать, кăшт "кантарса, вăй илтерсе" килĕсене кăларса ярать: сăлтавĕ пулсан вара штарф тӳлеттерет. Тӳлеме, паллах ĕнтĕ, ашшĕ-амăшĕсем тӳлеççĕ.

**Н.Курбанов** палăртнă тăрăх, Çамрăксен çурчĕн администрацийĕн дискотекăсем вăхăтĕнче йĕркене çирĕп тĕрĕслесе тăмалла, экран чаршавĕ хыçĕнче, каçарăр та̀, туалетра хăйсемпе илсе кĕнĕ эрехе ĕçме май памалла мар. Милицин хăйĕн задачи - йĕркене пăсассисене сирсе ярасси.

**КОРР.: Ачасем йĕркене пăснăшăн ашшĕ-амăшĕсене мĕнле явап тыттараççĕ?**

**А.Евграфов:** ТР Законĕпе килĕшӳллĕн (7-мĕш номерлĕ статья) право йĕркине сыхлакан органсем ашшĕ-амăшĕсене хăйсен тивĕçĕсене пурнăçламаншăн Раççей Федерацийĕнчи виçĕ "чи пĕчĕк ĕç укçи" чухлĕ штарф пама право пур. Ку вăл çула çитмен çамрăксем вăрласан, йĕркене темиçе хут пăссан. (Сăмахран, Нурлатра çакăн пек тĕслĕх пулнă: 9 çулти арçын ача "Теремок" ача садне чӳречерен кĕрсе... фломастерсем вăрланă). Кăçал айăпламалли çак мера 87 ашшĕ-амăшĕ тĕлĕшĕпе йышăннă.

**Н.Курбанов:** Çула çитмен ачасем йĕркене пăснă тĕлĕшпе хатĕрленĕ материалсене администраци çумĕнчи комиссие яратпăр, ачасем çеç мар, ашшĕ-амăшĕсем те пире ăнланмасан материалсене вĕсен ĕç вырăнĕсене те яма тӳр килет.

**КОРР.:** "Çавра сĕтел" хушшинчи калаçу ачасемпе çула çитмен çамрăксем хушшинче наркотиксемпе усă курнин йывăрлăхĕнчи çивĕч ыйтусене, çаплах ăна хирĕç кĕрешессинчи çитменлĕхсене палăртма май пачĕ. Ку тĕлĕшпе чи малтан правона сыхлакан органсем хумханма тытăнчĕç, çапла пулмалла та ĕнтĕ - вĕсен аллинче статистика, çавăнпа та вĕсем ăна шкула, учительсем, ашшĕ-амăшĕсем патне çитерес теççĕ. "Çавра сĕтел" хушшинче тĕрĕс палăртрĕç: врачсен ĕçĕ - сиплесси, милицин вара - айăпласси. (Прокурор каланă тăрăх, наркомансене тупса палăртассинче пирĕн çитменлĕхсем те пур. Уголовнăй шырав çак ĕç тĕлĕшпе начар ĕçлет). Анчах та айăпласси вăл юлашки мера вĕт-ха.

Ачасем эрех, наркотиксем патне туртăннин сăлтавĕ мĕнре-ха? Вĕсенчен пĕри ачасем аслисем пек пулма тăрăшни пулсан, тепри - ашшĕ-амăшĕсем çителĕклĕ тимлĕх уйăрманни. Çула çитмен ачасене аслисен юратăвĕ, ашшĕ-амăшĕн ăшши, уççăн калаçни çитмест. Кăна вĕсем путвалсенче, подъездсенче тата ытти çĕрте тупаççĕ, унта вĕсене ялан ăнланаççĕ, йышăнаççĕ. Йывăрлăхсене манма пулăшаççĕ, ăçта сăмахпа, ăçта черккепе, хăш-пĕр чухне вара наркотикпа та. Малтанлăха вĕсем нимĕн те ыйтмаççĕ, кайран вара... Урам законĕ çапла. Эпир вара, аслисем, ашшĕ-амăшсем çакна хирĕç мĕн тума пултаратпăр-ха? Малтанлăха кашни хамăртан ыйтар...

**Д.ТЯМАЕВА.**

# Пособи мĕнле тӳлеççĕ?

**Халăха социаллă хӳтлĕх паракан органсем патшалăхăн социаллă страховани шутĕнчен хăшпĕр йышши пособисем тӳлессин йĕрки çинчен ăнлантарса пама редакцие çырусем сахал мар килеççĕ. Пирĕн корреспондент социаллă страховани Фончĕн Чистай уйрăмĕн Нурлат районĕнчи тĕп уполномоченнăйне Валентина Порфирьевна АЛЕКСЕЕВАНА çак ыйту çине хурав пама ыйтнă.**

Предприятие е учреждение пĕтернипе ĕçрен хăтарнă йывăрлă тата ача çуратнипе панă отпускри хĕрарăмсене 12 уйăх хушши ĕççĕр ларакансене тӳлеме палăртнă йĕркепе тӳлеççĕ.

Медицина учрежденийĕсенче йывăрлă пулнипе учета тăнă хĕрарăмсене йывăрлă çӳренĕ вăхăтсемшĕн тата ача çуратнăшăн пĕр хутчен тӳлемелли пособие палăртаççĕ тата тӳлеççĕ. Ĕçлемен хĕрарăмсем те çакăн пек пособие илме пултараççĕ. Ун пек чухне учета тăни çинчен справка пулмалла, ăна ытти документсемпе пĕрле тăратмалла.

Ача çуратнă хыççăн пĕр хутчен паракан пособие ашшĕ-амăшĕсенчен пĕри е вĕсене улăштаракан илме пултарать. Ашшĕ-амăшĕ (вĕсене улăштаракан) ниçта та ĕçлемест те, вĕренмест те пулсан, пособие халăха социаллă хӳтлĕх паракан вырăнти органсем палăртаççĕ тата тӳлеççĕ.

Ашшĕпе амăшĕ вĕренӳ заведенийĕсенчен вĕренсе тухнă хыççăн ниçта та ĕçлемен пулсан, вĕсем юлашки вăхăтра вĕреннĕ вырăнтан илнĕ документ копине тăратаççĕ. Ĕç кĕнеки çукки тата юлашки вырăнта ĕçленĕ çĕртен документ пулманни вĕсене пособи тӳлемелле маррине пĕлтермест.

Ачан ашшĕпе амăшĕ юридически предпринимательсем пулмасан, вĕсен Фондăн пурнăçлакан органĕнче страхланакан пек регистрациленменни çинчен справка тăратаççĕ.

Ашшĕ-амăшĕсенчен пĕри коммерци структуринче, уйрăм е ют çĕршыв фирминче ĕçлет, анчах та пособи илмен тĕслĕхе илес пулсан, çакăн пек чухне Фондăн пурнăçлакан органĕсен ыйтăва татса пама пулăшмалла.

Ача çулталăк çура тултаричченкашни уйăхра илмелли пособие предприятие, учреждение тата ытти организацисене пĕтернĕ вăхăтра ĕçрен кăларнă йывăрлă хĕрарăмсем, йывăрлă тата ача çуртанă хыççăнхи, çаплах ача çулталăк çура тултаричченхи отпускра шутланакансем социаллă хӳтлĕх органĕсем урлă илеççĕ.

Çаксене пĕлмелле:

1. Предприятие пĕтернипе ĕçрен кăларнă хыççăн ĕçе вырнаçиччен предприяти уйăхри вăтам ĕç укçине тӳленĕ вăхăтра йывăрлă тата ача çуратнă, çаплах ача çулталăк çура тултаричченпаракан пособие тӳлемеççĕ.

Палăртнă компенсацие хĕрарăм ку е тепĕр сăлтава пула предприятирен илеймест, анчах та ăна илмелли мĕнпур справкăсем пулсан, ăна ĕçрен тухнă кунран тытăнсах пособи тӳлемелле тăваççĕ.

2. Çӳлерех асăннă пособисене йывăрлă пулнă, ача çуратнă хыççăнхи отпуск вĕçленнĕ тата ача çулталăк çура тултарнă хыççăн документсене ултă уйăхран кая юлмасăр тăратсан параççĕ.

3. Палăртнă йĕркене пăсса тӳленĕ пособи суммине (пособи илме срок тухнă хыççăн пырсан, кирлĕ документсем пулмасан тата ытти те) социаллă страховани шутĕнчен тӳлемеççĕ. Çакна та палăртса хăвармалла, халăха социаллă хӳтлĕх паракан орган тăрăшнипе РФ ФСС Тутарстан Республикинчи Регионаллă уйрăмĕн Управляющийĕн постановленийĕпе килĕшӳллĕн пособие тӳленĕ тĕслĕхсем те пур.

## "Заречнăй" лагерьти поварсене тавтапуç

Çу сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ, пирĕн ачасем те шкула çӳреççĕ ĕнтĕ. Анчах та эпир çулла "Заречный" лагерьте ĕçленĕ Ф.Сафиуллинапа С.Суинова поварсене халĕ те тав тăватпăр-ха. Вĕсем пирĕн ачасене хăйсеннисем пекех пăхнă тата питĕ тутлă апат пĕçерсе çитернĕ. Поварсене тавтапуç: иккĕшĕ вĕсем 170 ачана тутлă апатпа тивĕçтернĕ. Эпир вĕсене ĕçре ăнăçлăх, çемьере телейлĕ те лăпкă пурнăç сунатпăр.

**Ашшĕ-амăшĕсем.**

**• Пулать вĕт пурнăçра •**

# Çылăх

Эх, çылăх! Ватăла пуçласан кăна пурте хуйхăрса ун çинчен аса илетпĕр çав. Чиркĕвеваскаса Турăран каçару ыйтма пикенетпĕр. Хăшĕсем каясшăн мар, те хăраççĕ, те çылăхĕсем нумай...

Акă, пирĕн урам вĕçĕнче пурăнакан ватă Стихван пиччене арăмĕ ниепле те чиркĕве яраймасть. Ухвине аппа тарăхать: "Мăй таранах çылăхлă пирĕн Стихван, анчах ăна каçарттарас тесе чиркӳ çинчен асăнмасть те!"

Хăçанччен çапла тăсăлатчĕ, калама хĕн. Анчах мунчари мыскара хыççăн Стихван пичче пачах улшăнчĕ. Вăйлă ăшши парса çапăнма юратаканскер, кăмакара кăвар шăранса пĕтичченех, сĕрĕмрен хăрамасăрах, хĕпĕртесе васкарĕ мунчана. Лапка çине тăсăлса выртрĕ, икĕ аллинчи хурăн милĕкпе çатлаттарса, ĕрехетленсех килентерме тытăнчĕ ватă çанçурăмне.

Çĕрнĕ маччан хăмине çĕннипе улăштарнă та вĕрипе пăчăртанса тухнă сухăр сасартăк хырăмĕ çине персе анчĕ. "Ай-ай-ай!" - кăшкăрса пӳрте вирхĕнчĕ кил хуçи. Арăмĕ васкасах упăшкине пулăшма пикенчĕ. "Ĕмĕр пурăн - ĕмĕр вĕрен тет çав халăх, сăмала пуррине шутламарăм вĕт-ха", - тесе айăплăн пăхрĕ ашшĕ çине Петруха ятлă ывăлĕ. "Тепрехинче малтан каймастăп!" - сăмах картрĕ Стихван.

Анчах мунчана юратни каллех пĕтерчĕ. Тепрехинче те пĕрремĕш чупрĕ, ăшшине парса лапка çине хăпарчĕ: "Халĕ çук пулас!" - тесе вирлĕн çапăнма тытăнчĕ. Татах сухăр тумларĕ ĕнсе çине. Татах ним тума пĕлмесĕр, йĕрес пек, килне чавтарчĕ ватă çын. Ухвине аппа пуçне сулкаласа: "Çылăхлă эсĕ, Стихван, çылăхлă! Сан çумна анчах çыпçăнать вĕт-ха сухăрĕ те. Каçхине хăрушă тĕлĕксем куратăн пулмалла, ху кӳрентернĕ çынсемпе çĕрĕпе пуплешетĕн, ватăлнăçемĕн канăç памаççĕ. Мана та нумай кӳрентертĕн, чиркĕве каймаллах пулать, Турра кĕл тумалла, çылăхна каçарттармалла", - тесе пĕтерчĕ. Упăшкине парăнтарнине туйса, виçĕ хутчен кĕтесри турăш çине пăхса, сăхсăхса илчĕ. Арăмĕн вирлĕ сăмахĕсене, сухăр çыпăçнине, хăрушă тĕлĕксем кашни каçах курнине пĕтĕмлетсе Стихван хăй çылăхлине хирĕçлемерĕ, тепĕр кунне чиркĕве ирхи кĕлле хыпаланчĕ...

Пайтах пухăннă çылăхлисем. Пачăшкă: "Пĕр пытармасăр, çуна-кан çуртасем умĕнче, Турă умĕнче, сăхсăхса, хăвăрăн çылăхлă ĕçĕрсене асăнса: "Турă каçар!" - тесе мана хирĕç тăрăр", - тесен Стихван сăхсăхрĕ, çылăхĕсене асăнма пуçларĕ.

"Вăрçă хыççăнхи çулсенче колхоз председателĕнче ĕçленĕ чухне Варука ача çураттартăм. Арăма хисеплеменни пулчĕ ку, кӳрентертĕм ăна. Шеллерĕм пулас Варука, хитрескере. Упăшки вăрçăра вилнĕ, ачисем пур, çăнăх памалли хут çыртăм, унтан явăçсах кайрăм. Паспорт илме справкăсем ялти паллă çынсен ачисене тата кам нумайрах хăналакансене кăна паркаларăм. Бригадирта ĕçлекен ватă хĕрсемпе çыхлантăм. Ухвине ун çинчен йăлтах пĕлчĕ. Каллех арăма кӳрентертĕм. Бригадирта ĕçлерĕм, кам эрех ĕçтерет - вутта кайма лаша малтан пама хушаттăм. Вăрçăра вилнĕ салтак арăмĕсене кантура хупса "заем" çырăнмасăр каç пуличченех кăлармасăр мучитлерĕм...

Кӳрентернĕ мĕскĕн хĕрарăмсене, кӳрентернех çав! Марфа аппан сăвакан качакине хыснана аш паманшăн илсе тухрăмăр - упăшки вăрçăра вилнĕ, виçĕ ачи ашшĕсĕр юлнă... Кӳрентернĕ Марфа аппана, кӳрентернĕ. Юлашкинчен, ялти лавккара сутуçăра ĕçленĕ чух, тавар хакне ӳстерсе суткаланăттăм, тĕрĕслеме килекен комиссисене, милицие яланах хăна тумаллаччĕ: эрех, çыртмалли, кучченеç... Кӳрентертĕм ял çыннисене, кӳрентертĕм! Урăх астумастăп!" - шикленсе пăхрĕ пачăшкă çине Стихван.

Пачăшкă кĕлле пĕтерсе: "Çылăха кĕмелле мар, пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнмалла. "Мухтав турра! Турă каçар!" - тесе пĕлтерсен, Стихван та: "Мухтав Турра! Турă каçар!" - текелесе пачăшкă çине пăхрĕ, виçĕ хутчен сăхсăхрĕ. Çылăхĕсене каçарттарнипе хăйне пирĕшти пек туйса килнелле ыткăнчĕ.

**Илле ЯЛЛИН.**



Хăçанччен кĕтмелле-ши?

** Уяв юррисем*

## Хăвăн чуну савнине ĕмĕрлĕхе турăн-и?

*Юман вутти хутаканăн*
*Çăкри епле çунмасть-ши?*
*Хурăн вутти хутаканăн*
*Епле вăйлă каймасть-ши?*

*Çирĕк вутти хутаканăн*
*Çăкри епле пиçет-ши?*
*Инке-арăм илекенĕн*
*Ĕмри епле иртет-ши?*

*Çирĕк вутти хутакан*
*Ĕмĕрне вутă курман пуль.*
*Инке-арăм илекен*
*Ĕмĕрне хĕр курман пуль.*

*Инке-арăма тур куртăр,*
*Усал пулсан та хĕр пултăр,*
*Хĕр пултăр, пуян пултăр,*
*Пурçăн кĕпе тăхăнтăр.*

*Кӳршĕ ялăн каччисене*
*Инке-арăм та юрĕ.*
*Кӳршĕ ялăн хĕрĕсене*
*Ватă урçа та юрĕ.*

*Хамăр ялăн каччисем*
*Сар хĕрсене илĕç-ха.*
*Хамăр ялăн хĕрĕсем*
*Сар ачсене кайĕç-ха.*

*Сатин кĕпе çаннине*
*Кăнтăралла турăн-и?*
*Хăвăн чунă савнине*
*Ĕмĕрлĕхе турăн-и?*

Пухса йĕркелекенĕ
Е.ИЛЮШКИНА.

## Бактериоз чирĕ айăплă

***Кăçал пирĕн килте купăста лайăх ӳсмерĕ, йăран çинчех пуçĕсем çĕрсе кăшт тĕкĕнсенех татăлса ӳкеççĕ. Мĕнле чир вăл, мĕнле пĕтермелле? Тен эпир тĕрĕс мар сорт акса тăватпăр?***

***Ф.КОЛЬЦОВ.***

Ку чире лăймакаллă бактериоз теççĕ. Вăл купăстана çеç мар, ытти культурăсене те (кишĕр, йӳç кăшман) сиенлеме пултарать. Нумай чух вăл вăйсăр ӳсекен, аманнă е хуçăлнă ӳсен-тăрансем çинче аталанать. Чир çулçăсен тĕпĕнчен аталанма тытăнать. Сиенленнĕ çулçăсем лăймакаланса каяççĕ, тĕксĕмленеççĕ. Купăста пуçĕ шалтан çĕрет, унран ырă мар шăршă кĕрет. Вăйлă сиенленнĕ пуçсем ана çинчех çĕрсе пĕтеççĕ, кăшт тĕкĕнсенех татăлса ӳкеççĕ.

Вăйлах сиенленмен пуçсем вĕсене упрама хурсан çĕрсе каяççĕ.

Чире аталанма ăшă çанталăк, нӳрĕ тăни пулăшать.

Инфекци вăрăсем çинче, ӳсен-тăран юлашкийĕсем çинче упранса юлать.

Бактериоза пĕтерес тесен çак ĕçсене тăвас пулать. Купăстана сивĕ çĕрте, О градус тăракан вырăнта упрамалла. Акса-лартакан культурăсене черетлентермелле. Купăстана унччен туса илнĕ вырăнта тепĕр 4-5 çултан кăна лартмалла. Пухса кĕртнĕ хыççăн ана çинчи ӳсен-тăран юлашкийĕсене пухса çунтарса ямалла. Упрама таса, çирĕп, чир-чĕрпе сиенленмен пуçсене кăна суйласа илмелле. Купăстана ӳстернĕ чух йăран çинчи сиенленнĕ пуçсенчен тасатсах тăмалла. Акас умĕн вăрăсене 50 градус вĕри шывра 20-30 минут пиçĕхтерсе илмелле, кайран сивĕ шывпа чӳхемелле.

Хальхи вăхăтра ученăйсем тĕрлĕ чир-чĕре парăнман купăстан тĕрлĕ сорчĕсем нумай кăларнă. Хура ура текен чире, сăмахран, çак сортсем тӳсĕмлĕ: Амагер 611, Белорусская 75, Зимовка 1474. Суя сывлăм чирĕнчен хăраман сортсем: Амагер 611, Ладожская 22. Купăстан кила текен чирне парăнмансем: Лосиноостровская 8, Тайнинская, Ладожская 22, Зимняя грибовская 13, Московская поздняя. Бактериоз чирне тӳсĕмлисен шутне Заводская 257-263 сорт кĕрет.

## Уссинчен ытла сиенĕ

***Çур енне пирĕн чăхсем вăйсăрланса çитеççĕ. Майĕпен çеç уткалаççĕ, тăтăшах урисем çине лараççĕ. Кăçал та çавăн пек пулчĕ те, чылайăшне пусма тиврĕ. Сăлтавĕ мĕнре-ши?***

***Г.ПЕТРОВА.***

Çакă чăхсен рационĕнче кальципе фосфор çитменнипе веществосен ылмашăвĕ пăсăлнинчен килме пултарнă. Чăхсен организмĕнче çак веществосем шăмă тĕреклĕхне тытса тăма та, çăмарта хуппи тума та каяççĕ. Çавăнпа та чăхсене тулли рационпа тăрантарма тăрăшмалла. Çуллахи вăхăтра чăх-чĕп уçă вырăнта çӳренипе тĕрлĕ кăпшанкă, ытти çимĕçсене çиме пултарнăран организмра витаминсем, ытти япаласем çитменни пулмасть. Ытларах чух хĕллехи тата çуркуннехи вăхăтра аптăрама пултараççĕ.

Мĕн тумалла-ха? Кальци вырăнне хăшпĕрисем пурă хушса пама тăрăшаççĕ. Ку тĕрĕсех мар, унăн уссинчен ытларах сиенĕ пулма пултарать: апатпа пĕрле пурă лайăх ирĕлмест, апата ирĕлме чăрмантарать, ытларах пайĕ ирĕлмесĕрех каяшпа тухать.

Кальци лайăх ирĕлме Д3 витамин пулăшать. Вăл пулă çăвĕнче нумай. Унсăр пуçне аптекăсенче те çак витаминăн çу концентратне сутаççĕ. Рациона рак хуранĕ вĕтетсе хушни пулăшать. Шăмă е пулă шăммин çăнăхĕ, çăмарта хуппи, апат çĕпри хушни те усăллă.



# Пĕлтерӳсем

## Сутатпăр:

**Туса пĕтермен çуртри пĕр пӳлĕмлĕ хваттер. Телефон: 5-17-14.**

* * *

**Стенка, ют çĕршывра туса кăларнă телевизор, хаклă мар. Телефон: 5-21-58.**

* * *

**Некрасовка ялĕнчи дача, СПТУ микрорайонĕнче гараж валли никĕс хывнă участок. Телефон: 5-19-06.**

## Тĕрли:

**"Нурлатри суту-илӳ бази" АО яланлăха ĕçлеме васкавлă кирлĕ:**

**- газ хуçалăхĕшĕн явап тытакан котельнăй начальникĕ;**

**- тĕп бухгалтер, ĕç стажĕ 5 çултан кая мар пулмалла. Телефон: 5-43-50.**

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Л.Р.ФЕДОРОВА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 4052